УТВЕРЖДАЮ
Ректор БУ ЧР ДПО
«Чувашский республиканский
институт образования»
Минобразования Чувашии
............................Ю.Н. Исаев
«30» сентября ...2022 г.

**Государственная итоговая аттестация
по образовательным программам основного общего образования
в форме единого республиканского экзамена**

**Демонстрационный вариант**
контрольных измерительных материалов
для проведения в 2023 году единого республиканского экзамена
по чувашскому языку

Подготовлен кафедрой чувашского языка и литературы
БУ ЧР ДПО «Чувашский республиканский институт образования»
Минобразования Чувашии



# ЧĂВАШ ЧĔЛХИПЕ
## 2023 çулта тытмалли республикăн пĕрлехи экзаменĕн тĕслĕх варианчĕ

### Тĕслĕх варианта ăнлантарни

Тĕслĕх варианта 9-мĕш класс пĕтерекенсене пулас экзамен тытăмĕпе тата йĕркипе паллаштарма хатĕрленĕ: экзамен ĕçĕн тытăмне ăнлантарнă, заданисен формипе шутне кăтартнă, экзамен ĕçĕсене хакламалли критерисене палăртнă. Пĕлӳ содержанийĕн элеменчĕсене çавăн пекех кодификаторта кăтартнă.

Итленĕ текста çывăх çырмалли изложени текстне «Чăваш чĕлхипе çырнă экзамен ĕçне хакласси» пайра илсе панă.

### Вĕренекен валли хатĕрленĕ инструкци

Тĕрĕслевпе хаклав материалĕ 9 ĕçе пĕрлештерекен 3 пайран тăрать.

Экзамен ĕçĕсене тума 3 сехет те 55 минут (235 минут) уйăрнă.

**1-мĕш пайра** – итленĕ текста çывăх изложени çырмалла. Текста ачасем икĕ хут итлеççĕ.

Изложени текстне хуравсен бланкĕ çине çырмалла.

**2-мĕш пай** 7 ĕçрен (2-8) тăрать. Ку пайра сăмах, предложени, текст тишкермелли ĕçсене тумалла.

Кашни ыйту хыççăн 5-шер вариант хурав панă. Вĕсенчен тĕрĕсси пĕрре е темиçе пулма пултарать. Тĕрĕс мар хурав çырсан ăна туртмалла та унпа юнашар çĕннине çырмалла.

2-8-мĕш ыйтусен хуравĕсене текстра ятарласа палăртса хăварнă вырăна çырмалла, кайран хуравсен бланкĕ çине куçармалла.

**Экзамен ĕçĕн 3-мĕш пайĕнче** – сĕннĕ 3 темăран пĕрне суйласа илсе калăпăшĕ енчен пысăках мар ăслав сочиненийĕ хайламалла.

Сочинени текстне хуравсен бланкĕ çине çырмалла.

Хуравсене хура чернилпа çырмалла.

Экзамента орфографи словарĕпе усă курма юрать. Ĕçсене тунă чух хуравăша (черновика) çырма юрать. Ĕçсене хакланă чух хуравăшра тата тĕрĕслевпе-хаклав материалĕсен текстĕнче çырнине шута илмеççĕ.

Ĕçсене тунăшăн илнĕ балсене пĕрле хушаççĕ. Май килнĕ таран ытларах ĕç туса чи нумай балл пухма тăрăшăр.

Ĕçсене туса пĕтернĕ хыççăн кашни ĕçĕн хуравĕ тĕрĕс номерпе тăнипе тăманнине пăхса тухăр.

Тимлĕ пулăр! Васкамасăр, тĕплĕ ĕçлĕр!

*Ăнăçу сунатпăр сире!*

## 1-мĕш пай

1 ***Текста тимлĕ итлĕр те ăна çывăх изложени çырăр.***
Изложенири сăмах шучĕ 70-тен кая пулмалла мар.
Изложение тирпейлĕ, уçăмлă çырăр.

## 2-мĕш пай

**2-8-мĕш ĕçсен хуравĕ сăмах (темиçе сăмах) е цифрăсен йĕрки пулма пултарать.**

2 ***Синтаксис тишкерĕвĕ.***
Текста тĕплĕ, васкамасăр вуласа тухăр.
*(1)Пирĕн шкулта библиотека пур. (2)Вăл иккĕмĕш хутри пысăк пӳлĕмре вырнаçнă. (3)Унта хăтлă та тирпейлĕ, çутă та таса. (4)Эпĕ библиотекăна часчасах çӳретĕп. (5)Юлашки вăхăтра Марина Карягина кĕнекисене вуларăм.*
Предложенисен грамматика никĕсне тĕрĕс палăртнă вариантсене кăтартăр.
1) *библиотека пур* (1-мĕш предложени);
2) *пӳлĕмре вырнаçнă* (2-мĕш предложени);
3) *унта хăтлă та тирпейлĕ* (3-мĕш предложени);
4) *эпĕ çӳретĕп* (4-мĕш предложени);
5) *кĕнекисене вуларăм* (5-мĕш предложени).
**Хуравĕ:** ________________________

3 ***Пунктуаци тишкерĕвĕ.***
Чарăну палли лартмалли вырăнсене кăтартакан цифрăсене çырăр.
*Уйăпсем (1) пĕрремĕш юрпа (2) пирĕн пата çитеççĕ (3) вĕсен хĕп-хĕрлĕ кăкăрĕсем (4) сарă кăвак çурăмĕсем (5) хура пуçĕсемпе (6) çуначĕсем (7) шурă юр çинче (8) аякранах курăнаççĕ.*
**Хуравĕ:** ________________________

4 ***Синтаксис тишкерĕвĕ.***
*Вăрçă нуши-тертне тӳснĕ ват асаннен йывăр шăпи* сăмах майлашăвĕн тĕп компонентне çырăр.
**Хуравĕ:** ________________________

5 ***Орфографи тишкерĕвĕ.***
**Паллă тунă сăмахсене мĕнле çырнине тĕрĕс ăнлантарнă хурав вариянчĕсен номерĕсене çырăр.**
1) ***атте-анне*** – икĕ хут калакан сăмахсене дефиспа çырмалла;





2) ***икĕ çын*** – япала ятне ăнлантаракан хисеп ячĕсенче пĕр хупă сас палли çырмалла;
3) ***Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ*** – уяв ятĕнче малтанхи сăмахне çеç пысăк сас паллинчен пуçласа çырмалла;
4) ***райхаçат*** – мăшăр сăмахсене пĕрле çырмалла;
5) ***каятчĕ*** – пĕрре иртнĕ вăхăтри глаголсенче 3-мĕш сăпатра пурлă формăра та, çуклă формăра *тч*-па çырмалла.
**Хуравĕ:** ________________________

**Текста вуласа тухăр та 6-9-мĕш ĕçсене тăвăр.**

(1)Учитель… (2)Çак сăмах пуриншĕн те çывăх, хаклă. (3)Учитель кашни ачана пĕлӳ тĕнчин алăкне уçма пулăшать, пурнăçра тĕрĕс çул суйласа илме, лайăххине усаллинчен уйăрма, тăван халăхшăн усăллă çын пулма вĕрентет. (4)Кашни вĕрентекенех хăйĕн вĕренекенĕсем сапăр та хастар чун-чĕреллĕ çынсем пулччăр тесе тăрăшать, ырă шухăш-ĕмĕтпе пурăнать.

(5)Учитель ĕçĕ – сăваплă ĕç, çав вăхăтрах йывăр та. (6)Ачасене таса чунпа юратакан, хисеплекен, тимлĕ итлеме пĕлекен çын кăна учитель ятне тивĕç. (7)Унăн тĕп тĕллевĕ – ачасене вĕренӳре ĕлкĕрсе пыма, ĕçчен, ырă кăмăллă, таса чунлă, çынна инкекре пулăшма, çын ĕçне хаклама, çут çанталăка упрама, илемлĕхе курма, туйма, чĕр чунсене юратма, аслисене хисеплеме, кĕçĕннисене пулăшма вĕрентесси. (8)Учитель анне пекех: кашни ачан пурнăçĕпе, савăнăçĕ-хуйхипе пурăнать. (9)Кашни вĕренекене хăй ачине юратнă пек юратать, йывăр вăхăтра пулăшать, унпа пĕрле савăнать те, кулянать те.

(10)Учитель – кашни ача шăпинче ырă йĕр хăваракан, кашни ачана унăн ăстăнĕпе кăмăлне çирĕплетсе, пултарулăхне аталантарса пурнăç çулĕ çине кăларакан. *(Лариса Петрова* çырни тăрăх.)*

***Лариса Петрова** (1990) – *чăваш çыравçи, журналисчĕ.*

6 ***Текст содержанийĕн тишкерĕвĕ.***
**Текст содержанийĕпе хăш предложенисем тӳр килеççĕ?**
1) Кашни вĕрентекенех хăйĕн вĕренекенĕсем сапăр та хастар чун-чĕреллĕ çынсем пулччăр тесе тăрăшать, ырă шухăш-ĕмĕтпе пурăнать.
2) Ачасене таса чунпа юратакан, хисеплекен, тимлĕ итлеме пĕлекен çын кăна психолог ятне тивĕç.
3) Учитель кашни ял çыннин пурнăçĕпе, савăнăçĕ-хуйхипе пурăнать.
4) Кашни вĕренекене хăй мăнукне юратнă пек юратать, йывăр вăхăтра пулăшать, унпа пĕрле савăнать те, кулянать те.
5) Учитель – кашни ача шăпинче ырă йĕр хăваракан, кашни ачана унăн ăстăнĕпе кăмăлне çирĕплетсе, пултарулăхне аталантарса пурнăç çулĕ çине кăларакан.
**Хуравĕ:** ________________________

**7** *Илемлĕх мелĕсене тишкерни.*

**Танлаштарулла предложени(сен) номерне кăтартăр.**

(1) Çак сăмах пуриншĕн те çывăх, хаклă.

(2) Кашни вĕрентекенех хăйĕн вĕренекенĕсем сапăр та хастар чун-чĕрелле çынсем пулччăр тесе тăрăшать, ырă шухăш-ĕмĕтпе пурăнать.

(3) Учитель ĕçĕ – сăваплă ĕç, çав вăхăтрах йывăр та.

(4) Ачасене таса чунпа юратакан, хисеплекен, тимлĕ итлеме пĕлекен çын кăна учитель ятне тивĕç.

(5) Учитель анне пекех: кашни ачан пурнăçĕпе, савăнăçĕ-хуйхипе пурăнать.

**Хуравĕ:** ____________________

**8** *Лексика тишкерĕвĕ.*

*Савăнать* сăмахăн (9-мĕш предложени) антонимне текстра тупса çырăр.

**Хуравĕ:** ____________________

**2-8-мĕш ĕçсен хуравĕсене хурав бланкне куçарса çырма ан манăр. Кашни ĕçĕн хуравĕ тĕрĕс номерпе тăнипе тăманнине тепĕр хут пăхса тухăр.**



**3-мĕш пай**

**2-мĕш пайра вуланă текстпа усă курса 9.1, 9.2 е 9.3 ĕçсенчен пĕрне тăвăр. Хайлав çырас умĕн суйласа илнĕ ĕçĕн номерне палăртăр: 9.1, 9.2 е 9.3.**

**9.1** **«Тавах Сире, вĕрентекен!»** темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Тема пирки хăвăр мĕн шухăшланине уçса парăр.

Хăвăр шухăшăра икĕ тĕслĕхпе (аргументпа) ĕнентерĕр: пĕр тĕслĕхне итленĕ текстран, теприне вуланă текстран илĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе условин, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

Тĕслĕхе предложение цитатăласа е унăн номерне кăтартса илсе парăр.

Сочинени калăпăшĕ 70 сăмахран кая пулмалла мар.

Енчен те эсир экзаменра итленĕ тата вуланă текстсене ним улăштармасăр çырса илетĕр пулсан ĕçĕре 0 балл лартса хаклаççĕ.

Сочинение тирпейлĕ, уçăмлă çырăр.



**9.2** Вуланă текстра палăртнă **«Учитель – кашни ача шăпинче ырă йĕр хăваракан, кашни ачана унăн ăс-тăнĕпе кăмăлне çирĕплетсе, пултарулăхне аталантарса пурнăç сулĕ çине кăларакан»** шухăша уçса парса калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр.

Хăвăр шухăшăра вуланă текстри икĕ тĕслĕхпе (аргументпа) ĕнентерĕр: Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе условин, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

Тĕслĕхсене предложение цитатăласа е унăн номерне кăтартса илсе парăр.

Сочинени калăпăшĕ 70 сăмахран кая пулмалла мар.

Енчен те эсир экзаменра вуланă текста ним улăштармасăр çырса илетĕр пулсан ĕçĕре 0 балл лартса хаклаççĕ.

Сочинение тирпейлĕ, уçăмлă çырăр.

**9.3** *Вĕрентекен* тенине Эсир мĕнле ăнланатăр? Хăвăр панă определение уçса парăр. **«Кам вăл вĕрентекен?»** темăпа калăпăшĕпе пысăках мар (70 сăмахран кая ан пултăр) ăслав хайлавĕ çырăр. Тезис вырăнне Хăвăр панă определенипе усă курăр. Тезиса аргументлама икĕ тĕслĕхпе (аргументпа) усă курăр: пĕр тĕслехне вуланă текстран, теприне Хăвăр пурнăçăр опытĕнчен илĕр. Çакна тума ăславăн ĕнентерӳ мелĕсемпе (кӳртĕм сăмахсемпе, ыйтупа хурав пĕрлĕхĕпе, пиркепе следстви, условипе следстви, тĕллевпе условин, хирĕçлев çыхăнăвне палăртакан чĕлхе мелĕсемпе) сахалтан та икĕ хут усă курăр.

Тĕслĕхе предложение цитатăласа е унăн номерне кăтартса илсе парăр.

Сочинени калăпăшĕ 70 сăмахран кая пулмалла мар.

Енчен те эсир экзаменра итленĕ тата вуланă текстсене ним улăштармасăр çырса илетĕр пулсан – ĕçĕре 0 балл лартса хаклаççĕ.

Сочинение тирпейлĕ, уçăмлă çырăр.

**Кашни ĕçĕн хуравĕ тĕрĕс номерпе тăнипе тăманнине тепĕр хут пăхса тухăр.**

## Чăваш чĕлхипе çырнă экзамен ĕçĕсене хакласси

### 1-мĕш пай

**Итлемелли текст**

Шкул картишĕнче паян каллех кĕрхи асамлăхпа киленетĕп. Çил вĕрнипе хурăн çинчен ÿкекен вĕлтĕр-вĕлтĕр сарă çулçăсем вальс çаврăнаççĕ. Шăнкăрав сассипе урокран тухнă ачасем уçă сывлăша васкаççĕ… Сисмесĕрех хамăн юмахри пек телейлĕ те хаваслă ачалăхăма, пĕрремĕш хут шкула кайнине хам ума кăлартăм. Чечек çыххисем йăтнă шурă бантлă, хăмăр кĕпепе шурă саппунлă тантăшсем, вĕлле хурчĕ пек сĕрлекен шкул, илемлĕ те ăслă вĕрентекенсем…

Анне пек ырă сунса ăшшăн кĕтсе илнĕ пĕрремĕш вĕрентекене манма пулатьши тата? Вăл – чи ырри, чи ăсли, чи юратни, чи хакли, чи илемли, чи пултаруллли… Пĕрремĕш кунранах учитель пирĕншĕн иккĕмĕш анне пулса тăрать. Çапла, пĕрремĕш вĕрентекен irttерне уроксем халĕ те аса илÿ тĕнчинче пурăнаççĕ. Вĕсем пурте ман кун-çула пурнăç урокĕсем пулса таврăнаççĕ, хавхалантараççĕ, çунатлантараççĕ, ĕмĕтсене çывхартаççĕ. Пĕчĕкренех ырăпа усала уйăрма, Тăван çĕр-шыва хаклама, атте-аннене юратма вĕрентекенĕ те, ваттисене хисеплеме хăнăхтараканĕ те, тăванлăхпа туслăх вăйне туйма пулăшаканĕ те пĕрремĕш вĕрентекенех!

Çĕре çити пуç тайса сывлăх сунатăп Сире, манăн пĕрремĕш вĕрентекенĕм! Эсир – пирĕн ачалăха илемлетекенĕ, пуянлатаканĕ, пурнăçра хавхалантараканĕ, ăс параканĕ.

*(Светлана Никитина çырни тăрăх.)*
157 сăмах

### 1-мĕш ĕçе хакламалли критерисем
### Изложени текстĕнчи микротемăсем

*1-мĕш таблица*

| Абзац номерĕ | Микротема |
|---|---|
| 1 | Шкул картишĕ, кĕрхи çанталăк... Пĕрремĕш хут шкула кайнине аса илетĕп. |
| 2 | Пĕрремĕш вĕрентекен иккĕмĕш анне пекех. Вăл ырăпа усала уйăрма, Тăван çĕр-шыва хаклама, атте-аннене юратма вĕрентет, ваттисене хисеплеме хăнăхтарать, тăванлăхпа туслăх вăйне туйма пулăшать. |
| 3 | Тавах Сире, пĕрремĕш вĕрентекенĕм! Эсир – пирĕн ачалăха илемлетекенĕ, пуянлатаканĕ, пурнăçра хавхалантараканĕ, ăс параканĕ. |





### Изложение хакламалли критерисем

*2-мĕш таблица*

| | | |
|---|---|---|
| **И1** | **Изложенире оригинал текстăн содержанийĕ палăрни** | |
| | Текст содержанийĕ пĕртте пăсăлман, 1-мĕш таблицăра палăртнă пур микротемăна та уçса панă | 2 |
| | Текстăн тĕп содержанине уçса панă, анчах пĕр микротемăна сиктерсе хăварнă е хушса панă. | 1 |
| | Текстăн тĕп содержанине уçса панă, анчах пĕр микротемăран ытларах сиктерсе хăварнă е хушса панă. | 0 |
| **И2** | **Оригинал текстăн содержанине уçса панă чухнехи шухăш туллилĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ** | |
| | Ĕçре шухăш туллилĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ палăрать, логика йăнăшĕсем çук; текста абзацсене пайланă чухне йăнăшсем çук. | 2 |
| | Ĕçре шухăш туллилĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ палăрать, анчах логика йăнăшĕ 1 пур, тата/е абзацсем тунă чух 1 йăнăш кайнă. | 1 |
| | Ĕçре шухăш çыхăнулăхĕ палăрать, анчах логика йăнăшĕ 1-рен ытла тунă, тата/е абзацсем тунă чух 2 йăнăш кайнă. | 0 |
| **И3** | **Пуплев тĕрĕслĕхĕ, уçăмлăхĕ** | |
| | Шухăша тĕрĕс те ăнланмалла уçса пама шкул ачи йышлă лексикăпа, тĕрлĕ грамматика хатĕрĕсемпе усă курнă. | 2 |
| | Ачан сăмах пуянлăхĕ пур, анчах пĕрешкел грамматика хатĕрĕсемпе вĕçĕмсĕр усă курни сисĕнет. | 1 |
| | Сăмах çÿпçи чухăн, пĕрешкел грамматика хатĕрĕсемпе вĕçĕмсĕр усă курнă. | 0 |
| | **Пур критерие те (И1–И3) тулли тивĕçтерсе çырнăшăн пухнă пĕтĕм балл сумми** | **6** |

Тĕрĕс çырма пĕлнине изложенипе сочинени тăрăх иккĕшне те пăхса уйăрммăн хаклаççĕ (7-мĕш таблица).

### 2-мĕш пай

**2-мĕш пайăн** ĕçĕсене **тĕрĕс** тусан шкул ачи кашни ĕçшĕн 1-ер балл илет. Хурав **тĕрĕс пулмасан е вăл пачах пулмасан** – 0 балл лартаççĕ.

*3-мĕш таблица*

| Ĕç номерĕ | Тĕрĕс хурав |
|---|---|
| 2 | 14<e>41 |
| 3 | 345<e>çак цифрăсен кирек мĕнле йĕрки |
| 4 | йывăр шăпи |
| 5 | 23<e>32 |
| 6 | 15<e>51 |
| 7 | 5 |
| 8 | кулянать |

**3 пай**

**9-мĕш (9.1, 9.2 е 9.3) ĕçе хакламалли критерисем**

**9.1-мĕш ĕçе хакламалли критерисем**

9.1-мĕш ĕçе (ăслав сочиненине) çак критерисемпе хаклаççĕ.

*4-мĕш таблица*

| № | Ăслав сочинение хакламалли критерисем | Балсем |
|---|---|---|
| С1 | **Ача çырнă ĕç сĕннĕ темăпа тӳр килни** | |
| | Сочинени содержанийĕ сĕннĕ темăпа тӳр килет. | 2 |
| | Сочинени содержанийĕ сĕннĕ темăпа тӳр килет, анчах çырнă текстра темăран пăрăннă 1 вырăн пур. | 1 |
| | Сочинени панă темăпа тӳр килмест, е ача ĕçĕнче темăран пăрăннă 2 е ытларах вырăн пур. | 0 |
| С2 | **Шкул ачин шухăшĕ палăрни** | |
| | Текст авторĕсен позицине йышăнса е хăй шухăшне хӳтĕлесе шкул ачи хăйĕн позицине уçăмлă кăтартать. | 2 |
| | Текст авторĕсен позицине йышăнса е хăй шухăшне хӳтĕлесе шкул ачи хăйĕн позицине уçăмлă кăтартаймасть. | 1 |
| | Вуланă тата итленĕ текстсем пирки шкул ачи хăй шухăшне каламасть е хăй позицийĕ çинчен ячĕшĕн çеç *Эпĕ авторсемпе килĕшетĕп. Эпĕ авторсемпе килĕшместĕп* йышши предложенисем çырса çырлахать. | 0 |
| С3 | **Сочинени пуплевĕн ăслав тĕсне тӳр килни** | |
| | Сочинени пуплевĕн ăслав тĕсĕпе тӳр килет, шухăша çирĕплетме 2 (пĕр тĕслĕхне итленĕ текстран, теприне вуланă текстран илнĕ) аргументпа усă курнă. | 2 |
| | Сочинени пуплевĕн ăслав тĕсĕпе тӳр килет, анчах 1 аргументпа кăна усă курнă. | 1 |
| | Ăслава пăхăнман текст хайланă. | 0 |
| С4 | **Шухăш пĕр пĕтĕмлĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ тата шухăшсене йĕркипе уçса пыни** | |
| | Ĕçре шухăш туллилĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ палăрать, логика йăнăшĕсем çук; текста абзацсене пайланă чухне йăнăшсем çук. | 2 |
| | Ĕçре шухăш туллилĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ палăрать, анчах логика йăнăшĕ 1 пур, тата/е абзацсем тунă чух 1 йăнăш кайнă. | 1 |
| | Ĕçре шухăш çыхăнулăхĕ палăрать, анчах логика йăнăшĕ 1-рен ытла тунă, тата/е абзацсем тунă чух 2 йăнăш кайнă. | 0 |
| С5 | **Пуплев тĕрĕслĕхĕ, уçăмлăхĕ** | |
| | Шухăша тĕрĕс те ăнланмалла уçса пама йышлă лексикăпа, тĕрлĕ грамматика хатĕрĕпе усă курнă. | 2 |
| | Ачан сăмах пуянлăхĕ пур, анчах пĕрешкел грамматика хатĕрĕпе усă курнă. | 1 |
| | Сăмах çӳпçи чухăн, пĕрешкел грамматика хатĕрĕпе вĕçĕмсĕр усă курнă. | 0 |
| | **Сочинени çырса пухнă пĕтĕм балл сумми (С1–С5 критерисемпе)** | **10** |

**Асра тытăр!** Экзаменра итленĕ тата вуланă текстсене ним улăштармасăр çырса илнĕ пулсан ĕçе **0** балл лартса хаклаççĕ. Тĕрĕс çырма пĕлнине изложенипе сочинени тăрăх иккĕшне те пăхса уйрăммăн хаклаççĕ (7-мĕш таблица).

© Чăваш Республикин Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерстви 2022



**9.2-мĕш ĕçе хакламалли критерисем**

9.2-мĕш ĕçе (ăслав сочиненине) çак критерисемпе хаклаççĕ.

*5-мĕш таблица*

| № | Ăслав сочинение хакламалли критерисем | Балсем |
|---|---|---|
| С1 | **Вуланă текстра палăртнă шухăша уçса пани** | |
| | Вуланă текстра палăртнă шухăша тĕрĕс уçса панă. | 2 |
| | Вуланă текстра палăртнă шухăша пĕтĕмĕшле тĕрĕс уçса панă, анчах çырнă текстра темăран пăрăннă 1 вырăн пур. | 1 |
| | Вуланă текстра палăртнă шухăша тĕрĕс уçса паман, е çырнă текстра темăран пăрăннă 2 е ытларах вырăн пур. | 0 |
| С2 | **Шкул ачин шухăшĕ палăрни** | |
| | Текст авторĕсен позицине йышăнса е хăй шухăшне хӳтĕлесе шкул ачи хăйĕн позицине уçăмлă кăтартать. | 2 |
| | Текст авторĕсен позицине йышăнса е хăй шухăшне хӳтĕлесе шкул ачи хăйĕн позицине уçăмлă кăтартаймасть. | 1 |
| | Вуланă тата итленĕ текстсем пирки шкул ачи хăй шухăшне каламасть е хăй позицийĕ çинчен ячĕшĕн çеç *Эпĕ авторсемпе килĕшетĕп. Эпĕ авторсемпе килĕшместĕп* йышши предложенисем çырса çырлахать. | 0 |
| С3 | **Сочинени пуплевĕн ăслав тĕсне тӳр килни** | |
| | Сочинени пуплевĕн ăслав тĕсĕпе тӳр килет: текст тĕп шухăша (тезиса) пăхăнать, ку шухăша çирĕплетме вуланă текстран илнĕ 2 аргументпа усă курнă. | 2 |
| | Сочинени пуплевĕн ăслав тĕсĕпе тӳр килет, анчах 1 аргументпа кăна усă курнă. | 1 |
| | Ăслава пăхăнман текст хайланă. | 0 |
| С4 | **Шухăш пĕр пĕтĕмлĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ тата шухăшсене йĕркипе уçса пыни** | |
| | Ĕçре шухăш туллилĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ палăрать, логика йăнăшĕсем çук; текста абзацсене пайланă чухне йăнăшсем çук. | 2 |
| | Ĕçре шухăш туллилĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ палăрать, анчах логика йăнăшĕ 1 пур, тата/е абзацсем тунă чух 1 йăнăш кайнă. | 1 |
| | Ĕçре шухăш çыхăнулăхĕ палăрать, анчах логика йăнăшĕ 1-рен ытла тунă, тата/е абзацсем тунă чух 2 йăнăш кайнă. | 0 |
| С5 | **Пуплев тĕрĕслĕхĕ, уçăмлăхĕ** | |
| | Шухăша тĕрĕс те ăнланмалла уçса пама йышлă лексикăпа, тĕрлĕ грамматика хатĕрĕпе усă курнă. | 2 |
| | Ачан сăмах пуянлăхĕ пур, анчах пĕрешкел грамматика хатĕрĕпе усă курнă. | 1 |
| | Сăмах çӳпçи чухăн, пĕрешкел грамматика хатĕрĕпе вĕçĕмсĕр усă курнă. | 0 |
| | **Сочинени çырса пухнă пĕтĕм балл сумми (С1–С5 критерисемпе)** | **10** |

**Асра тытăр!** Экзаменра итленĕ тата вуланă текстсене ним улăштармасăр çырса илнĕ пулсан ĕçе **0** балл лартса хаклаççĕ. Тĕрĕс çырма пĕлнине изложенипе сочинени тăрăх иккĕшне те пăхса уйрăммăн хаклаççĕ (7-мĕш таблица).

© Чăваш Республикин Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерстви 2022

## 9.3-мĕш ĕçе хакламалли критерисем

9.3-мĕш ĕçе (ăслав сочиненине) çак критерисемпе хаклаççĕ.

*6-мĕш таблица*

| № | Ăслав сочинение хакламалли критерисем | Балсем |
|---|---|---|
| С1 | **Сăмах пĕлтерĕшне ăнлантарса пани** | |
| | Ача сăмахăн определенине çырнă, пĕлтерĕшне ăнлантарса панă. | 2 |
| | Ача сăмахăн определенине çырнă, анчах пĕлтерĕшне ăнлантарса паман. | 1 |
| | Ача сăмахăн определенине тĕрĕс çырман е пĕлтерĕшне ăнлантарса паман. | 0 |
| С2 | **Шкул ачин шухăшĕ палăрни** | |
| | Текст авторĕсен позицине йышăнса е хăй шухăшне хӳтĕлесе шкул ачи хăйĕн позицине уçăмлă кăтартать. | 2 |
| | Текст авторĕсен позицине йышăнса е хăй шухăшне хӳтĕлесе шкул ачи хăйĕн позицине уçăмлă кăтартаймасть. | 1 |
| | Вуланă тата итленĕ текстсем пирки шкул ачи хăй шухăшне каламасть е хăй позицийĕ çинчен ячĕшĕн çеç *Эпĕ авторсемпе килĕшетĕп. Эпĕ авторсемпе килĕшместĕп* йышши предложенисем çырса çырлахать. | 0 |
| С3 | **Сочинени пуплевĕн ăслав тĕсне тӳр килни** | |
| | Сочинени пуплевĕн ăслав тĕсĕпе тӳр килет: текст тĕп шухăша (тезиса) пăхăнать, ку шухăша çирĕплетме 2 (пĕр тĕслĕхне вуланă текстран, теприне пурнăç опытĕнчен илнĕ) аргументпа усă курнă. | 2 |
| | Сочинени пуплевĕн ăслав тĕсĕпе тӳр килет, анчах 1 аргументпа кăна усă курнă. | 1 |
| | Ăслава пăхăнман текст хайланă. | 0 |
| С4 | **Шухăш пĕр пĕтĕмлĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ тата шухăшсене йĕркипе уçса пыни** | |
| | Ĕçре шухăш туллилĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ палăрать, логика йăнăшĕсем çук; текста абзацсене пайланă чухне йăнăшсем çук. | 2 |
| | Ĕçре шухăш туллилĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ палăрать, анчах логика йăнăшĕ 1 пур, тата/е абзацсем тунă чух 1 йăнăш кайнă. | 1 |
| | Ĕçре шухăш çыхăнулăхĕ палăрать, анчах логика йăнăшĕ 1-рен ытла тунă, тата/е абзацсем тунă чух 2 йăнăш кайнă. | 0 |
| С5 | **Пуплев тĕрĕслĕхĕ, уçăмлăхĕ** | |
| | Шухăша тĕрĕс те ăнланмалла уçса пама йышлă лексикăпа, тĕрлĕ грамматика хатĕрĕпе усă курнă. | 2 |
| | Ачан сăмах пуянлăхĕ пур, анчах пĕрешкел грамматика хатĕрĕпе усă курнă. | 1 |
| | Сăмах çӳпçи чухăн, пĕрешкел грамматика хатĕрĕпе вĕçĕмсĕр усă курнă. | 0 |
| | **Сочинени çырса пухнă пĕтĕм балл сумми (С1–С5 критерисемпе)** | **10** |

**Асра тытăр!** Экзаменра итленĕ тата вуланă текстсене ним улăштармасăр çырса илнĕ пулсан ĕçе **0** балл лартса хаклаççĕ. Тĕрĕс çырма пĕлнине изложенипе сочинени тăрăх иккĕшне те пăхса уйрăммăн хаклаççĕ (7-мĕш таблица).

© Чăваш Республикин Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерстви 2022



## Тĕрĕс çырма пĕлнине хакламалли критерисем

Тĕрĕс çырма пĕлнине изложенипе сочинени тăрăх иккĕшне те пăхса уйрăммăн хаклаççĕ. Паллах, пысăк, пĕчĕк тата пĕрешкел йăнăшсене (халь усă куракан хаклав виçисене тĕпе хурса) шута илмелле.

*7-мĕш таблица*

Тĕрĕс çырма пĕлнине çак критерисемпе хаклаççĕ.

| № | Тĕрĕс çырма пĕлнине хакламалли критерисем | Балсем |
|---|---|---|
| Г1 | ***Орфографи нормисене пăхăнни*** | |
| | Орфографи йăнăшĕсем çук, е 1-2 йăнăш пур | 2 |
| | 3-4 йăнăш пур | 1 |
| | 5 е ытларах йăнăш пур | 0 |
| Г2 | ***Пунктуаци нормисене пăхăнни*** | |
| | Пунктуаци йăнăшĕсем çук, е 1-2 йăнăш пур | 2 |
| | 3-4 йăнăш пур | 1 |
| | 5 е ытларах йăнăш пур | 0 |
| Г3 | ***Грамматика нормисене пăхăнни*** | |
| | Грамматика йăнăшĕсем çук, е 1-2 йăнăш пур | 2 |
| | 3-4 йăнăш пур | 1 |
| | 5 е ытларах йăнăш пур | 0 |
| Г4 | ***Пуплев нормисене тытса пыни*** | |
| | Пуплев йăнăшĕсем çук, е 1-2 йăнăш пур | 2 |
| | 3-4 йăнăш пур | 1 |
| | 5 е ытларах йăнăш пур | 0 |
| Ф1 | ***Факт тĕлĕшĕнчен тĕрĕс çырни*** | |
| | Факт йăнăшĕсем çук | 2 |
| | 1 йăнăш пур | 1 |
| | 2 е ытларах йăнăш пур | 0 |
| **Изложенипе сочинени çырса пухнă пĕтĕм балл сумми (Г1–Г4, Ф1 критерисемпе)** | | **10** |

Тĕрĕс çырма пĕлнине хакланă чухне (ГК1–ГК4) **изложенипе сочинени калăпăшне** шута илес пулать. 7-мĕш таблицăра кăтартнă нормăсемпе изложенипе сочиненире усă курнă сăмахсен пĕтĕм йышĕ сахалтан та 140 пулсан хакламалла. Изложенипе сочиненири сăмахсен пĕтĕм йышĕ 70-139 пулсан – кашни критерипе 1-ер балран ытларах лартма юрамасть.

Изложенипе сочиненири сăмахсен пĕтĕм йышĕ 70-139 пулсан **1 балл** лартма çак условисем кирлĕ:

Г1 – орфографи йăнăшĕсем çук (е 1 пĕчĕк йăнăш пур);
Г2 – пунктуаци йăнăшĕсем çук (е 1 пĕчĕк йăнăш пур);
Г3 – грамматика йăнăшĕсем çук;
Г4 – пуплев йăнăшĕсем çук.

© Чăваш Республикин Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерстви 2022

Изложенипе сочиненири сăмахсен пĕтĕм йышĕ 70-тен сахалтарах пулсан – ĕçе туман тесе йышăнаççĕ, 0 балл лартса хаклаççĕ.

Ача изложение е сочинение çырман пулсан çакăн пек хакламалла:

– изложенипе сочиненири сăмахсен пĕтĕм йышĕ 140 сăмахран сахал пулмасан Г1–Г4 критерисем тăрăх 7-мĕш таблицăра кăтартнă нормăсемпе хакламалла;

– изложенипе сочиненири сăмахсен пĕтĕм йышĕ 70-139 пулсан – Г1–Г4 критерисем тăрăх 1-ер балран ытларах лартма юрамасть;

– изложенипе сочиненири сăмахсен пĕтĕм йышĕ 70-тен сахалтарах пулсан – ĕçе 0 балл лартса хаклаççĕ.

Кашни критерипе **чи пысăк балл** илсен – экзамен ĕçĕшĕн 9-мĕш класс ачи **пĕтĕмпе 33 балл** пухĕ.

Тĕп вĕренĕвĕн вĕренӳ программисемпе патшалăхăн пĕтĕмлетӳ аттестацине ирттермелли йĕркепе (Раççей Çутĕç министерстви тата Рособрнадзор 2018 çулхи чӳкĕн 07-мĕшĕнче кăларнă 189/1513 №-лĕ приказ) килĕшӳллĕн кашни ĕçе пĕрпĕринпе канашламасăр икĕ эксперт тĕрĕслет. Енчен те вĕсем лартнă балсем тӳр килмесен ĕçе виççĕмĕш эксперт тепĕр хут пăхса тухса хак парать.

Виççĕмĕш эксперта предмет комиссийĕн председателĕ экзамен ĕçне маларах тĕрĕслемен экспертсенчен палăртать.

Виççĕмĕш эксперта экзамен ĕçне маларах тĕрĕсленĕ экспертсем лартнă балсемпе паллаштараççĕ. Виççĕмĕш эксперт лартнă балл татăклă шутланать, ун хыççăн урăх тĕрĕслемеççĕ.

Пĕтĕм ĕçе тĕрĕслесе икĕ эксперт лартнă хаклав 10 е ытларах балпа уйрăлса тăрать пулсан виççĕмĕш эксперт 1-9-мĕш ĕçсене кашни критери тăрăх тепĕр хут тĕрĕслет.